Сирĕн ыйтăвăрсене туллин тивĕçтереççĕ

# Пурте пулар таса та тирпейлĕ




Муркашри мунча çуртĕнче вырнаçнă Ольга Алексеевна Афанасьева уйрăм предпринимателĕн «Ольга» парикмахерскийĕ çак кунсенче район çыннисене çăмăллатнă услугăсем сĕнме пуçларĕ.

– Кунти çĕнĕлĕхсемпе эпир питĕ кăмăллă. Ĕçлекенсем вашават тата клиентсем майлă пулни, вĕсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме тăрăшни йыхравлать те пире çакăнта. Тата çĕнĕ вĕренӳ çулĕ умĕн учительсемпе шкул ачисене çăмăллатнă услугăсем пани пире «Ольга» патнех туртать, – терĕ С. Скворцова учительница.

Çăмăллатнă услугăсем вара никама та айккинче хăвармаççĕ. Тĕслĕрен, вĕрентекенсемпе шкул ачисем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ май тата сентябрь уйăхĕпех кунта 10 процент йӳнĕрехпе çӳç кастарма пултараççĕ.

Услугăсем тенĕрен, вĕсем анлă. Парикмахерскинче çӳç кастарнипе пĕрлех маникюрпа макияж услугисене, туй валли çӳç кастарассине, 350 тенкĕпех пистолетпа хăлхасем ыраттармасăр шăтарассине тата сиплĕ хăлха çаккисем çакса ярассине пурнăçлаççĕ. Кунта пырас текенсем маларах 89279993939 телефонпа шăнкăравласа çырăнма пултараççĕ.

«Ольга» парикмахерскинче хальлĕхе иккĕн ĕçлеççĕ пулсан, О. Афанасьева çывăх вăхăтрах тепĕр парикмахер кирли пирки пĕлтерчĕ. Вĕренме янă маникюрша та кĕçех ĕçе тухмалла. Çапла вара кунта район çыннисен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерессi вăй илсе пырать. Сăн ӳкерчĕкре эсир Тамара парикмахера ĕç вăхăтĕнче куратăр.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Килти хушма хуçалăх

# Вĕллене мĕнле çурт кирлĕ?

***Кĕр çитрĕ. Ун хыççăн хĕл те инçетре мар. Ун пирки те паянах шутламалла. Хĕл валли вĕллесем лартма ятарлă çурт тăвас тетĕп. Ăна мĕнле материалтан ăсталасан лайăхрах-ши?***

**А. СИСТЕШКИН.**

Утар ĕçне пуçăнакансем кунашкал ыйтупа час-часах тавлашаççĕ. Кĕр çитнĕ май кунта хамăн практикăри сăнавпа паллаштарам-ха.

Вĕллери хуртсене тĕп сакайĕнче те, пахчари пӳртре те хĕл каçарма пулать. Анчах вĕсенче хĕл каçа сывлăш температури пĕрешкел тăмасть. Çак сăлтавпа пыл хурчĕсем чирлеме пултараççĕ.

Пыл хурчĕсем валли хĕлле сывлăш температури 4 градус сивĕрен иртмелле мар. Çуркунне вара 5 градусран ăшăрах пулмалла мар.

Чи лайăх меслет вăл – вĕллесене путвал евĕр çуртра хĕл каçарасси. Унта сывлăш температури ялан пĕрешкел. Хĕллехи çуртăн (омшаник) маччи çĕрпе тан пулмалла. Маччине хулăн (80-90 см) сармалла. Кунта тăм, вĕтетнĕ улăм, типĕ тăпра юрăхлă. Сывлăш лайăх çӳретĕр тесен, пăрăх вырнаçтармалла.

Урайне типĕ хăйăр сармалла. Хăма урай юрăхсăр, мĕншĕн тесен хăмасем эсир утнă чух авăнса пыл хурчĕсене канăçсăрлантараççĕ. Стенисене хăмасемпе е пĕчĕк пĕренесемпе çирĕплетмелле. Хĕллехи çурт виçи килте миçе вĕлле пулнинчен килет.

**А. ВЯЗОВ.**

Шăмат кунхи рубрика

# Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

***Паянхи рубрикăна район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ Вадим Юрьевич ЗАХАРОВ ертсе пырать.***

## Пассажирсене илсе çӳрессипе

**Пĕлес килет, Муркашран хулана тата ытти ялсене пассажирсене турттаракан предпринимательсем пурте саккуна пăхăнаççĕ-и? Вĕсен ĕçне прокуратура пăхса тăрать-и?**

**С. ВАСИЛЬКОВА, П. СИДОРОВ.**

Çапла, саккуна пăхăнасси пур ĕçре те тивĕçлĕ вырăнта пулмалла. Пассажирсене турттарассипе ĕçлекен предпринимательсен тĕслĕхĕнче те вăл айккинче юлаймасть. Çавăнпа та вĕсем саккунпа килĕшӳллĕ ĕçленине пăхса тăрассине те эпир айккинче хăвармастпăр. Çитменнине юлашки вăхăтра пассажир турттаракан транспорт хатĕрĕсемпе çулсем çинче пулнă инкексем те кунта пысăк çитменлĕхсем пытанма пултарни пирки калаççĕ.

Иртнĕ кунсенче Муркаш районĕпе ĕçлекен шалти ĕçсен пайĕн çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕпе пĕрле пассажирсем турттаракансем ĕçлекен саккунсене епле пăхăннине тĕрĕслерĕмĕр. Çакă курăнчĕ. Предпринимательсем çак сферăри хăш-пĕр правилăсене пăхăнмаççĕ е сĕмсĕррĕн пăсаççĕ. Тĕслĕхрен: автобуссем маршрута техника енчен юсавсăр пулсан та тухаççĕ (пассажирсем валли тунă хăрушсăрлăх пиçиххийĕсем ĕçлемеççĕ, автобуссене ытларах пассажирсем лартма салонра хăйсем тĕллĕн сиденисем тăваççĕ, авариллĕ алăксем уçăлмаççĕ т. ыт. те). Хăш-пĕр предпринимательсем маршрутра ĕçлекен водительсен ĕçпе канăвне те саккунпа килĕшӳллĕ йĕркелемеççĕ. Çаксем хыçĕнче çулсем çинчи инкексем пытанни пирки калама та кирлĕ мар.

Тĕрĕслевре тупса палăртнă çитменлĕхсемпе 3 предприниматель тĕлĕшпе Раççей Федерацийĕн Административлă майпа правăна пăснин кодексĕн 14.1 статйин 3-мĕш пайĕнче кăтартнă йĕркене пăснăшăн административлă ĕçсем пуçарма тиврĕ.

## Взятка панăшăн айăпларĕç

**Водительсем çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн ĕçченĕсене взятка пама хăтланни практикăра пур-и?**

**И. СМЕЛОВ, В. ВАСИЛЬЕВ.**

Сайра хутра пулин те, пирĕн практикăра кун пек тĕслĕхпе те тĕл пулма тивет. Кăçалхи августăн 13-мĕшĕнче район сучĕ взяткăшăн айăплав приговорне Çармăс Республикин гражданинĕ тĕлĕшпе кăларчĕ. Водитель ГИБДД инспекторне çул-йĕр правилисене пăснăшăн протокол çырмасăр уйрăлма сĕннĕ. РФ Уголовнăй Кодексĕн 291 статйин 2-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн саккуна пăснăшăн должноçри çынна взятка пани уголовнăй айăплав шутланать.

Судра айăпланакан хăй «ĕçне» йышăнман пулсан та, патшалăх айăплавçи йĕрке пăснине кăтартма пултарнă. Суд айăплă çынран виçĕ пин тенкĕ шыраса илме приговор кăларчĕ. Иртнĕ кунсенче вăл саккунлă вăя кĕчĕ.

Çĕр ĕçченĕн çулталăкне халалласа

# Ĕç тухăçĕ савăнтарать

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен ответлă тапхăрĕ пырать. Çак вăхăтри производство – çитес хĕл кунĕсенчи ăнăçлă ĕçсен кăшăлĕ. Ман шутпа кам мĕн чуль паха апат хатĕрленине кура ӳсĕмĕсем те куç умĕнчех. «Восток» хуçалăх çитес хĕл кунĕсем валли выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрленĕ. Вĕсен пахалăхĕ те ыррине шантарать. Çапла каларĕç малашлăха пăхса машинăпа ĕне сăвакан операторсем Анфиса Наумова, Лидия Пушкина, Валериян Наумов. 100 ĕне пăхаççĕ çак хастарсем. Кăтартăвĕсем те начаррисен ретĕнче мар. Июль уйăхĕнче кăна Валериян Иванович хăйĕн ушкăнĕнчи ĕнесенчен пурĕ 8960 килограмм сĕт суса илнĕ. Ĕçтешĕсем те унран питĕ кайра пымаççĕ. «Хĕл валли паха апат пултăр. Вара тата ӳсĕмлĕрех ĕçлĕпĕр», – терĕç ĕне сăвакансем.

Пĕрремĕш кун ĕçлемеççĕ вĕсем ĕне ферминче. Çавăнпа та кунти ĕç мелне те алă тупанĕ çинчи пекех курса тăраççĕ. Апла пулсан ӳсĕмсем валли те çул уçă. Çапла пултăрччĕ те.

**А. БЕЛОВ.**

Çĕнĕ сăвăсем

## Пурпĕрех пыратпăр çул тупса

Чарлансем ăсанчĕç кăнтăра
Килнĕрен кĕр кунĕ çывхарса.
Ан хурлан-ха эсĕ халь, йăмра,
Пурпĕрех пыратпăр çул тупса.

Шурă юрĕ ӳкрĕ васкаса,
Тен, ăнланчĕ пирĕн шухăша?
Эсĕ те хуплантăн мамăкпа –
Пурпĕрех пыратпăр çул тупса.

Юрату шăпи ялан çапла,
Кĕрхи çилĕ те юрлать туйса.
Ан васка, йăмра, эс хурланма
Эпир çукшăн халĕ сан çумра.

Вăхăт иртет часах, ав, чупса,
Çурхи кунĕ килет çывхарса.
Эсĕ те хупланăн симĕспе –
Пире кĕтĕн туратсем айне.

## Асамат кĕперĕ

Тухăça асамат эрешлерĕ,
Çакрĕ çичĕ тĕслĕ кавирне.
Тĕлĕнтермĕш асамат кĕперĕ
Хура пĕлĕт юлашки çинче.

Хитре тĕсне пăхса сăнатăп,
Киленсе кашни курмассерен.
Алăпа тытса пăхма утатăп
Сăрĕсем куçа илĕртнĕрен.

Нумайччен пăхса эп тĕлĕнетĕп
Пит кĕске кун-çуллă илемрен.
Çавăнпа-ши, тен, ăна шеллетĕп
Çĕтнĕрен вăл вăхăчĕ иртсен.

Çут çанталăк илемне туятăп,
Парнелет яланах вăл пире.
Çак ытарлă ырлăха сунатăп
Эпĕ ырă кăмăлпа сире!

**Л. ФАДЕЕВ.**

Суд залĕнчен

# Вăрлас çул çине тăрсан...

2009 çулхи утă уйăхĕн 16-мĕшĕнче Муркаш район сучĕ Шупашкар арçынĕсен ĕçне пăхса тухрĕ. Мĕнпе çак «хисепе» тивĕç пулнă-ха вĕсем? Çакна пăхса тухăпăр та аяларах.

Тӳрех калар, 1988 çулта çуралнă Александр Альбертович Марковичпа унран пĕр çул çамрăкрах Максим Витальевич Клопова ют пурлăха хапсăнни суд сакки çине илсе çитернĕ те.

Мĕнле аталаннă-ха çак çамрăксем суйласа илнĕ çĕнĕ технологи?

Яла тăванĕсем патне килнĕ А. Маркович 2008 çулхи раштав уйăхĕн 19-мĕшĕнче 15 сехет тĕлĕнче Калайкассинче пурăнакан асламăшĕн И. Соловьеван пурăнмалли пӳрт çенĕкне çăрана çĕмĕрсе кĕрсе кил хуçи хĕрарăмĕн 10000 тенкине хăйĕн тăвать.

Пĕрре укçа тĕлне пулнă çамрăк тепĕр çур çултан та çак çулпах хăйне «пуянрах» кăтартма шутлать. 2009 çулхи çу уйăхĕн 6-мĕшĕнче хулара пурăнакан Максим Витальевич Клопов юлташĕпе кĕсьере тыткаламалăх укçа тума малтан калаçса татăлсах Калайкассине «сунара» кайса килме сăмах тытаççĕ. Çитменнине А. Маркович асламăшĕ укçине ăçта тытнине те пĕлет ĕнтĕ. Çак тĕллевпе хайхискерсем 23 сехет тĕлĕнче пахчапа пырса И. Соловьева çурчĕн çенĕкĕ патне çитсе тăраççĕ. Пӳрте кĕмелли алăк хупă. Анчах тĕллевлĕ çамрăксен унта иртмеллех. Алăк çумĕнчи чӳрече кантăкне илсен унта решетке пулни «паттăрсен» пĕр çулне пӳлет, анчах кĕске вăхăтлăха кăна. Сылтăмарах вырнаçнă пĕчĕк алăкран тепĕр пӳлĕме кĕрсен хайхискерсен çенĕке те çул уçăлать. Ӳссе çитнĕ мăнук çак вăхăтра асламăшĕ çывăрнине пĕлнĕ. Анчах ун патĕнче пĕрле пурăнакан асатте те пулма пултарать. Вĕсем ăнсăртран ан тухчăр тесе М. Клопов алăка тĕксе тăнă вăхăтра Александр кĕсье телефонĕн дисплейĕпе çутатса укçа шырать. Сунар ăнăçсăррипе тарăхса çамрăксем пӳрте кĕреççĕ. Пӳлĕмре çутă çук, телевизор кăна ĕçлет. Ватăсем çывăрнипе усă курса çамрăксем телевизор çутипех укçа шырас ĕçе кӳлĕнеççĕ. Асламăшĕ çывăрнă матрас айне пăхнă чух карчăк вăранса каять. Çамрăксем хăраса кил хушшине тухса тараççĕ. Пӳртре çутă çутăлать. Максимпа Саша хăйсен тĕллевне çав-çавах пăрахмаççĕ: алăк хушăкĕнчен ватăсем калаçнине итлеççĕ. «Юрать-ха укçи сан çумра пулса», – тет карчăк старике. Çăмăл çул суйласа илнисене çакă çеç кирлĕ. Укçа ăçтине пĕлнĕскерсем кĕçех пуçĕсене футболкăсем туртса лартса пӳрте вирхĕнсе кĕреççĕ. В. Залеев старике питрен çапса Максим унăн кĕсйинчен укçа кăларса илет, хăйсене ан паллаччăр тесе çутă сӳнтерет. Карчăк пулăшу ыйтса кăшкăрса ярсан ăна та лăпланма ыйтса çупкă лекет.

Ку «операцирен» çамрăксем 800 тенкĕпе тухаççĕ. Анчах тӳрĕ çултан пăрăнакансен çулĕ инçе каяймасть. Вĕсем йĕрке хуралçисен аллине çакланаççĕ. Нумаях пулмасть пулнă район сучĕ Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 161 статйин 2-мĕш пайĕн «а, в, г» пункчĕсемпе, 158 статйин 2-мĕш пайĕн «в» пункчĕпе пăхнă преступленисене тунă тесе айăпласа 69 статьян 3-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн А. Марковича 2 çул та 4 уйăхлăха, М. Клопова Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 161 статйин 2-мĕш пайĕн «а, в, г» пункчĕсемпе 2 çуллăха ирĕкрен хăтарма приговор кăларчĕ. Çапла вĕçленчĕ çăмăл пурнăç шыракансен пĕр çулĕ. Çак истори нумайăшĕшĕн тĕслĕх вырăнне пуласса шанас килет.

**П. ПАВЛОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн следователĕ.**

Тĕнчене илемлетер

# Чечексен ытамĕнче

Иртнĕ эрнере районти ача-пăча библиотекипе Муркашри историпе краеведени музейĕнче «Тĕнчене чечексемпе илемлетер» уяв иртрĕ. Унта ялти библиотека ĕçченĕсемпе тата район центрĕнче пурăнакан çынсемпе пĕрлех ача садне çӳрекенсем те пулчĕç. Аслисене ытларах эмел курăкĕсемпе сиплĕ «сĕткенсем» вырнаçнă сĕтел тата уява хутшăнма кăмăл тунă Маргарита Николаевна Пушкарева ӳстерекен тюльпанпа пион чечек суханĕсемпе тымаррисем илĕртрĕç пулсан, ачасене хăйсем тĕллĕн хутран чечек ăсталасси ытларах кăмăла кайрĕ. Унсăр пуçне сиплĕ курăксемпе туслă «ăрăмçă» та пулчĕ уявра.



Районти историпе краеведени музейĕнче уява пухăннисене Ирина Егорова çамрăк ӳнерçĕн выставкипе «Ман юратнă чечек» конкурс кĕтрĕ. Конкурса «Солнышко» тата «Путене» ача сачĕсене çӳрекен шăпăрлансем хутшăнчĕç. Пĕр-пĕр чечеке сăнлакан ятарлă костюмсăр пуçне илемлĕ сăвă та хатĕрленĕ вĕсем. Хĕвел çаврăнăш, шăнкăрав курăкĕ, çеçпĕл (подснежник), утмăлтурат тата салтак тӳми илем кӳчĕç уява. Чечексем чĕрĕлсе тăнăнах туйăнчĕ ахаль те тĕрлĕ çеçке çыххисемпе, тĕрĕпе те ӳкерчĕксемпе тулнă залра.

Уяв хăни, Нискассинчи М.Н. Пушкарева, юлашки вăхăтра Чăваш енре çулсеренех чечек çаранĕсем нумайланса пынишĕн савăннине палăртрĕ. Чечексем пире тирпейлĕрех пулма хистенипе пĕрлех ырă кăмăл та парнелеççĕ.

**Е. РОМАНОВА,**
**районти историпе краеведени музейĕн директорĕ.**